ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ НАГРАДИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 4 ТАТА 7 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин патшалăх наградисем çинчен" 2005 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 15 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 62 №; 2010, 85 №; 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 6 №; 2014, 3, 9 №-сем; 2015, 12 №; 2016, 10 №; "Республика" хаçат, 2018, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 4 статьяра:

а) çакăн пек çырса пиллĕкмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"Çар çапăçăвĕсенче граждан, служба тата çар тивĕçне пурнăçланă чухне хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн "Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орден медалĕпе, Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăлама тăратас ĕçе награда илме тăратнă çыннăн Раççей Федерацийĕн патшалăх наградисем, е тата Раççей Федерацийĕн Президенчĕ хавхалантарнисем, е тата федерацин патшалăх влаçĕн органĕсен ведомство наградисем (хавхалантарнисем), вĕсемпе граждан, служба тата çар тивĕçне пурнăçланă

чухнехи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн маларах наградăланă (хавхалантарнă), пур пулсан тăваççĕ.";

ă) пиллĕкмĕш абзаца улттăмĕш абзац тесе шутлас;

2) 7 статьяра:

а) çакăн пек çырса çиччĕмĕш тата саккăрмĕш çĕнĕ абзацсем хушса хурас:

"Наградăланă çын вилнĕ е çынна вилнĕ хыççăн наградăланă пулсан Чăваш Республикин патшалăх наградисене тата вĕсемпе пĕрле паракан документсене упрамашкăн еткерçĕсене параççĕ (алла параççĕ).

"Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ" хисеплĕ ята вилнĕ хыççăн панă чухне еткерçĕсене "Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ" хисеплĕ ят пани çинчен калакан паллăна, хисеп хутне алла параççĕ.";

ă) çиччĕмĕш абзаца тăххăрмĕш абзац тесе шутлас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи пуш уйăхĕн 29-мĕшĕ
9 №